Олимпиадные задания по чувашскому языку и литературе
для муниципального тура республиканской олимпиады
школьников общеобразовательных организаций
с обучением на чувашском языке
2017-2018 учебный год. 8 класс

Максимальный балл – 50
Время выполнения – 90 минут

1. Çак йĕркесен авторĕ кам? Ятне, ашшĕ ятне, хушаматне туллин çырăр.

(1)*Пирĕн, чăвашсен, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ мул-тавар пур.* (2)*Çав çитмĕл те çичĕ тĕслĕ мулран чи пахи – асатте-асаннесем, атте-аннемĕрсем пире управлăха та усравлăха пехиллесе парса хăварнă чĕлхемĕр-тĕр.* (3)*Ĕнтĕ мана хуть те мĕн калăр та, халăхăмăра пин-пин çул пĕр çыхăра тытса тăракан сăваплă кăшăл вăл – пирĕн чĕлхемĕр!* (4)*Тымарĕсем тарăн пирĕн чĕлхемĕрĕн, вулли парка, тăрри лаштра.* (5)*Çуллен турат çумне турат хушса пырать вăл, турачĕсерен çитмĕл те çичĕ çулçă çурать, çеçке сарать, çимĕç парать.* (6)*Çав çимĕç пире чĕрĕлĕх парса тăрать.*

2. Текстра вăйлă формăри паллă ятне (ячĕсене) тупăр. Унтан текстра ытти паллă ячĕсене тупăр та вăйлă формăра çырăр.

3. *Халăхăмăра* сăмахăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне палăртса тухăр. Сăмах тĕпне кăтартăр.

4. *Вулли* сăмаха пуçламăш формăра çырăр, вырăсла куçарăр.

5. *Çичĕ* сăмаха çак формăсене лартăр: 1) 1 сăпат, туху падежĕ; 2) 1 сăпат, пару падежĕ; 3) 2-мĕш сăпат, çуклăх падежĕ; 4) 3-мĕш сăпат, пĕрлелĕх падежĕ; 5) 3-мĕш сăпат, пирке падежĕ.

6. Мĕн вăл саламалик? Чăваш саламаликĕ хăш тĕрĕк халăхĕсен паттăрла эпосĕсемпе пĕр кĕвĕллĕ? 3 эпос ятне асăнăр.

7. Ача чухне Георгий Краснов çыравçă мĕнле псевдонимпа пичетленнĕ?

8. Хăй пурăннă чухнех чăваш халăхĕн шăпчăк кайăкĕ тесе кам çинчен каланă? Унăн «Пурăнас килет» хайлавĕн жанрне палăртăр.

9. Геннадий Айхин «Хамăн» сăввин çаврине вĕçлĕр:

Мухтав турра: хăть каçару
Ыйтмастăп – пурăннишĕн!
Ман тавăру та – тавăру
….

1. Хама çеç – хам пулнишĕн.
2. Хама çеç – тавăрнишĕн.
3. Çынна усал суннишĕн.

10. Чăваш литературинче икĕ Юмарт – Виталий Юмарт тата Геннадий Юмарт – паллă йĕр хăварнă. *Юмарт* сăмахăн пĕлтерĕшне ăнлантарăр.